28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
МАЙ
18
ЭРНЕКУН
94(6845) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

# Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

## Чĕрĕ туртăм вăйĕпе уйхир ĕçĕсенче усă курассине лайăхлатмалли мерăсем çинчен

### ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ йышăннă постановлени

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çакна палăртать: республикăри колхозсемпе совхозсенче ĕç выльăхĕпе уйхир ĕçĕсенче усă курас ĕçре чылай пысăк çитменлĕхсем пур. ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсем нумайĕшĕ юлашки çулсенче чĕрĕ туртăм вăйĕ ялхуçалăхĕнче пысăкрах вырăн йышăнса тăма тытăннине, чĕрĕ туртăм вăйĕпе тумалли ĕçсен хисепĕ колхозсемпе совхозсенче чылай ÿснине, республикăри нумай районсемпе колхозсенче вара ялхуçалăх ĕçĕсем пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех чĕрĕ туртăм вăйĕпе уйхир ĕçĕсенче туллин тата тĕрĕс усă курнинчен килнине çителĕклĕ шута илмеççĕ. Уйхир ĕçĕсенче чĕрĕ туртăм вăйĕпе усă курасси çине ытларах çаврăнса пăхас тата çапла майпа ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн ирттерме кирлĕ условисене туса хатĕрлес вырăнне, Улатăр, Йĕпреç, Первомайски, Кувакино, Хĕрлĕ Чутай тата ытти хăшпĕр районсенчи партипе совет органĕсен руководителĕсем чĕрĕ туртăм вăйне тивĕçлипе хакламаççĕ тата ĕç выльăхĕсене пăхса усрас, лайăх тытса усрас тата уйхир ĕçĕсенче вĕсемпе туллин усă курас тесе кирлĕ пек тăрăшмаççĕ. Çак тата ытти районсенчи нумай колхозсенче уйхир ĕçĕсем вăхăтĕнче ĕç выльăхĕсене зоотехникăпа ветеринари енчен пулăшассине питĕ начар туса пыраççĕ; ĕç выльăхĕсене пăхса усрас тата вĕсемпе усă курас тĕлĕшри обезличкăна халиччен те пĕтермен, партипе совет органĕсен руководителĕсем вара вăл фактсене курмаççĕ тата чĕрĕ туртăм вăйĕпе усă курас ĕçре çирĕп йĕрке тăвассишĕн тивĕçлипе кĕрешмеççĕ.

Районсенчи партипе совет органĕсем тĕрĕслесе тăманнине пула, хăшпĕр колхозсен руководителĕсем ĕç выльăхĕсене тĕрĕс тата вăхăтра тăрантармалла тума тăрăшмаççĕ, çавна пула чылай лашасем начар пирки уйхир ĕçĕсенче ĕçлемеççĕ.

ВКП(б) Обкомĕнче çакна кăтартса паракан даннăйсем пур: лашапа ĕçлемелли юсавлă инвентарьсем, хăмăт-ĕнерчĕксем тата ытти ут таврашĕсем çителĕклĕ мар пирки чылай лашасемпе ĕç вăкăрĕсем ялхуçалăх ĕçĕсенче ĕçлемеççĕ; çав вăхăтрах ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсем колхозсенчи лашапа ĕçлемелли транспорт инвентарĕсене тата ут таврашĕсене юсаса хатĕрлес тĕлĕшпе транспорт инвентарĕсемпе ут таврашĕсене колхозсенче хăйсенче тата вырăнти промышленность предприятийĕсенче туса хатĕрлес тĕлĕшпе вырăнти майсемпе усă курас тесе, халиччен те тивĕçлĕ мерăсем йышăнман. Колхозсенче кивĕ тимĕрçĕ лаççисене, ут таврашĕ юсамалли тата йывăç каскаламалли мастерскойсене юсас тата çĕнĕрен лартас ĕçсене çителĕксĕр туса пыраççĕ (çав мастерскойсемпе тимĕрçĕ лаççисем колхозсен лашапа ĕçлемелли инвентарĕсемпе транспорт хатĕрĕсене, ут таврашĕсене юсама кирлĕ).

Колхозсенче лашапа ĕçлемелли инвентарьсене, транспорт инвентарĕсене юсас еçĕпе тивĕçлипе тăрăшса ĕçлеменни çакăн патне илсе пырать: çав инвентарьсем чылайĕшĕ çулран çулах юсанмасăр выртаççĕ, вĕсене салатса тата çухатса пĕтереççĕ, çавна пула колхозсен производствăри ĕç майĕсем чакса пыраççĕ. Ут таврашĕсене вăхăтра юсаманни тата начар юсани ĕç выльăхне суранлатать, ăна нумай вăхăтлăха стройран кăларать.

Уйхир ĕçĕсенче чĕрĕ туртăм вăйĕпе усă курас тĕлĕшри пысăк çитменлĕхсене пĕтерес тата çапла майпа ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн туса ирттерме колхозсемпе совхозсен производствăри майĕсене чылаях ÿстерес шутпа, ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çапла йышăнать:

1. Ялхуçалăх ĕçĕсенче чĕрĕ туртăм вăйĕпе туллин тата тĕрĕс усă курасси вырăнсенчи партипе совет организацийĕсен пысăк задачи пулса тăрать тесе шутласа, ВКП(б) райкомĕсене колхозсемпе совхозсенче чĕрĕ туртăм вăйĕпе усă курас ĕçре пулнă пысăк çитменлĕхсене пĕтерме хушас. Çак майпа:

а) колхозсемпе совхозсенче ĕç выльăхне хирти условисенче пăхса усрас тата тăрантарас енĕпе çирĕп йĕрке туса хумалла, хуçалăхри шалти ĕçрен чĕрĕ туртăм вăйне май пур таран ытларах пушатса, вĕсемпе тÿрремĕнех хирти ĕçсенче усă курмалла;

б) колхоз правленийĕсем ĕç выльăхĕсене — лашасемпе майракаллă шултăра выльăхсене — хирти ĕçсем пынă вăхăтра пăхса усрамалли тата вĕсемпе усă курмалли правилăсене вунăкунлă срокра туса хатĕрлесе колхозниксен пĕрлешÿллĕ пухăвĕсенче çирĕплетме тивĕçлĕ.

Ĕç выльăхĕсене пăхса усрас тата вĕсемпе усă курас тĕлĕшпе уйхир бригадисенче тĕрĕс мерăсем палăртса хума тата вĕсене пурнăçа кĕртме колхозсене пулăшмашкăн унта зоотехниксене, ветврачсене тата агрономсене ямалла;

в) хирти ĕçсем пынă вăхăтра ĕç выльăхĕсене тĕрĕс тăрантарас тата çĕрле кĕтÿре çÿретес ĕç çине уйрăмăнах тимлĕн çаврăнса пăхмалла; ĕç выльăхĕсене çĕрле кĕтÿре çÿретме тÿр кăмăллă колхозниксене уйăрса лартмалла, çавăн пекех тата выльăхсене çĕрле кĕтрÿре çÿретме курăк лайăх ÿсекен участоксем уйăрса памалла;

г) колхозсен аякра выртакан çĕрсем пур пулсан, уйрăмăнах Улатăр, Пăрачкав, Кувакино, Елчĕк, Шăмăршă районĕсенчи колхозсенче, лашасемпе ĕç вăкăрĕсене шăрăх тата çăмăрлă кунсенче кантарма уйхир бригадисенче витнĕ лупасайсем туса лартас ĕçе организацилемелле тата бригадăсенче ĕç выльăхĕсене шăварма лайăх çăлсем пулмалла;

д) колхозсемпе совхозсенче ĕç выльăхĕсемпе ушкăнпа ĕçлеме чарас, мĕншĕн тесен çакă вăл ĕçри обезличка патне тата ялхуçалăх ĕçĕсен пахалăхĕ чакасси патне илсе пырать. Колхозсемпе совхозсене çапла тума хушас: ĕç выльăхĕпе ĕçлекен колхозниксене тата совхоз рабочийĕсене кашнине уйрăм заданисем памалла, вĕсене ĕçшĕн колхозра йышăннă ĕç нормисемпе расценкисем тăрăх тÿлемелле, ĕç выльăхĕсене пăхса усрас тата вĕсемпе усă курас ĕçре халĕ те пулса пыракан обезличкăна пĕтерес тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнмалла.

Çакăн пек йĕрке тăвас пулать: колхозсенче пуринче те конюхсем сумне çирĕплетнĕ кашни лашапа ĕç вăкăрĕ мăнтăррипе начаррине кура, вĕсене мĕнле пăхнине кура кăна конюхсене ĕçкунĕсем çырса памалла.

2. Ĕç выльăхĕсемпе туллин усă курмалла тăвас, колхозсемпе совхозсем валли лашапа ĕçлемелли инвентарьсем тата транспорт инвентарĕсем çителĕклĕх туса хатĕрлес шутпа, Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе ВКП(б) райкомĕсене çапла тума хушас:

а) лаша кÿлсе çĕр ĕçлемелли машинăсемпе хатĕрсене юсаса йĕркене кĕртес ĕçе организацилемелле, çак ĕçе июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне туса çитермелле;

б) тырпула пуçтса кĕртнĕ вăхăтра лаша кÿлсе ĕçлемелли машинăсене юсас ĕçе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ 1945 çулхи январĕн 3-мĕшĕнче йышăннă постановленире кăтартнă срокесенче вĕçлемелле.

3. Вырăнти промышленность Халăх Комиссариачĕ (Егоров юлташа), Вырăнти топливо промышленность управленине (Стурков юлташа), Вăрман промышленность Халăх Комиссариатне (Зверев юлташа), СССР Совнаркомĕ çумĕнчи промкооперации управленийĕн Чăваш республикинчи уполномоченнăйне (Степанов юлташа), Вăрмана сыхлакан управленине (Яковлев юлташа), Чăвашсоюза (Терентьев юлташа), Чăвашкоопинсоюза (Шадрин юлташа), Сельбоsпромснаба (Герасимов юлташа), Çĕрĕç Халăх Комиссариатне (Широв юлташа), райисполкомсемпе ВКП(б) райкомĕсене 1945 çулта лашасемпе ĕçлемелли транспорт инвентарĕсем туса кăларас тата юсас тĕлĕшпе Чăваш АССР Совнаркомĕ предприятисене, артельсемпе колхозсене панă плана пĕр сăмахсăрах пурнăçа кĕртмелле тума хушас.

4. ВКП(б) райкомĕсене çапла тума хушас: ялхуçалăх артелĕн уставĕ кăтартнă тăрăх, кăкарса ĕçлемелли машинăсене тата транспорт инвентарĕсене пур колхозсенче те уйхир бригадисене, бригадăсенче вара — колхозниксене çирĕплетсе памалла, юлхавлăн тата тирпейсĕр тыткаласа машинăсемпе инвентарьсене пăснăшăн тата çĕмĕрнĕшĕн айăплисене материальнăй ответ тытармалла тăвас пулать.

5. Наркомместпрома, Промкооперации управленин уполномоченнăйне, Коопинсоюза, Наркомзема, Чăваш АССР Совнаркомĕ кăтартса панă план тăрăх, çунасемпе урапасем тата ут таврашĕсем тăвакан мастерскойсем организацилеме, çавăн пекех тата колхозсем валли тикĕт урапа маçĕ туса кăларма хушас.

6. Колхозсен тимĕрçĕ лаççисене юсаса ĕçе ямалли плана районсем тăрăх, районсенче вара колхозсем тăрăх çирĕплетмелле, колхозсен тимĕрçĕ лаççисене ... инструментсемпе оборудованисем тупса парас тĕлĕшпе тата вĕсенче ĕçлеме тимĕрçсем тупса лартас тĕлĕшпе васкавлă мерăсем йышăнмалла.

Колхозсенчи опытлă тимĕрçсем ертсе пынипе, çавăн пекех тата МТС-семпе совхозсен мастерскойĕсенче, промартельсемпе райпромкомбинатсенче тимĕрçĕ çук колхозсенчи колхозниксене явăçтарса, кирлĕ чухлĕ тимĕрçсем вĕрентсе хатĕрлессине организацилемелле.

7. Наркомместпрома, Промкооперации управленин уполномоченнăйне, çавăн пекех тата Союз промышленноçĕн предприятийĕсен директорĕсене предприятисемпе артельсенче колхозсен тимĕрçĕ лаççисем валли оборудовани туса кăларассине организацилеме хушас, çакăн чухне металл тата ытти материалсен отходчĕсемпе усă курмалла.

8. Ялхуçалăх ĕçĕсенче чĕрĕ туртăм вăйĕпе туллин тата тĕрĕс усă курнине парти органĕсем пĕр чарăнусăр тĕрĕслесе тăмалла тăвас шутпа, ВКП(б) райкомĕсене çапла тума хушас: ялхуçалăх ĕçĕсенче чĕрĕ туртăм вăйĕпе мĕнле усă курнине кашни колхозпа совхозра тĕрĕслесе тăмалла тăвас пулать, чĕрĕ туртăм вăйĕпе усă курас ĕç мĕнле пыни çинчен райком бюровĕн ларăвĕсенче пăхса тухса, чĕрĕ туртăм вăйĕпе туллин те тĕрĕс усă курас ĕçе лайăхлатма колхозсемпе совхозсене пулăшас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла.

Колхозсене çапла тума сĕнес: чĕрĕ туртăм вăйĕ мĕнли çинчен тата вĕсемпе бригадăра уйхир ĕçĕсенче мĕнле усă курни çинчен кашни эрнерех колхоз правленийĕсен ларăвĕнче уйхир бригадирĕсен отчечĕсене итлемелле.

9. Малта пыракансен опытне колхозниксем хушшинче сарас шутпа, ВКП(б) райкомĕсене, «Чăваш Коммуни» тата «Красная Чувашия» хаçатсен редакторĕсене, çавăн пекех тата районри хаçатсен редакторĕсене малта пыракан сухаçăсен, акакансен, конюхсен, кĕтÿçсен тата ытти колхозниксен опытне, ĕç выльăхĕсемпе усă курас тата вĕсене сыхласа усрас тĕлĕшри ĕç опытне анлăн çутатса тăма хушас.

10. ВКП(б) райкомĕсене çапла тума хушас: лашапа ĕçлемелли инвентарьсемпе ут таврашĕсене туса кăларас тата юсас ĕç мĕнле пыни çинчен, çавăн пекех тата колхозсенчи тимĕрçĕ лаççисене юсаса ĕçе ярас тата çĕнĕрен туса лартас тĕлĕшпе, колхозсем валли тимĕрçсем вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе мĕнле мерăсем йышăнни çинчен кăçалхи июнĕн 20-мĕшĕ тĕлне ВКП(б) Обкомне отчет тăратмалла.

Çак решение хаçатсенче пичетлесе кăларас.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн
Секретарĕ И. ЧАРЫКОВ.

## ХИСЕП ХĂМИ

Ĕççынни депутачĕсен Ишлей райсовечĕн исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕ тăратнă тăрăх, çуракинче тухăçлăн тата лайăх ĕçленĕшĕн малта пыракан çак колхозсене республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ:

12. Водопьянов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Н. И. Иванов юлташ). Колхоз 106 гектар тĕштырăсене 7 кун хушшинче акса пĕтернĕ. Тĕштырăсене лайăх пахалăхпа пĕтĕмпех машинăпа ретĕн-ретĕн, яровизациленĕ вăрлăхпа акнă.

13. «Самолет» колхоз (председателĕ Н. В. Амурцев юлташ). Колхоз 47 гектар тĕштырăсене агротехника правилисене тĕплĕн пăхăнса тата пысăк пахалăхпа 5 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ.

## Тĕштырăсене акса пĕтернĕ районсем

Халиччен пĕлтернĕ районсемсĕр пуçне, майăн 17-мĕшĕ тĕлне илнĕ сведенисем тăрăх, Ишлей, Советски, Шупашкар, Етĕрне, Елчĕк тата Октябрьски районсем тĕштырăсемпе пĕр çул ÿсекен курăксене акса пĕтернĕ.

Ытти районсенчен тĕштырăсемпе пĕр çул ÿсекен курăксене акас тĕлĕшпе çаксем малта пыраççĕ: Калинино районĕ 99,3 процент, Вăрнар районĕ—94,7 процент, Чурачăк районĕ—94,1 процент акнă.

### Куславкка МТС-ĕ хăйĕн планне тултарнă

КУСЛАВККА, майăн 17-мĕшĕ. (Телефонпа). Майăн 15-мĕшĕ тĕлне Куславкка МТС-ĕ çуркунне тракторсемпе тумалли ĕçсен планне 101,3 процент тултарса 3654 килограмм горючи перекетленĕ.

А. ЛАВРЕНТЬЕВ,
МТС директорĕ.

### 6 бригада хăйсен планне тултарнă

ЧКАЛОВСКИ, майăн 17-мĕшĕ. (Телефонпа). МТС-чи трактористсен 6 бригади çуркунне тумалли ĕçсен планне тултарчĕç. Уйрăмăнах кăçал 9-мĕш бригада (бригадирĕ Пыркин юлташ) лайăх ĕçлет, вăл урапаллă кашни тракторпа 185 гектар сухаласа плана 142 процент тултарчĕ. Ĕç пахалăхне пур çĕрте те лайăх тесе йышăннă. Çак бригада 1200 килограмм горючи перекетленĕ. 10-мĕш бригадăра (бригадирĕ Григорьев юлташ) урапаллă кашни трактор пуçне 150-шар гектар сухаласа плана 125 процент тултарнă. Çавăн пекех хăйсен планне: 6-мĕш бригада (бригадирĕ Северов юлташ) 111 процент, 1-мĕш бригада (бригадирĕ Халиуллин юлташ) 102 процент, 5-мĕш бригада (бригадирĕ Шитов юлташ) 100 процент, 14-мĕш бригада (бригадирĕ Быков юлташ) 100 процент тултарчĕç.

Трактористка Носева юлташ иртнĕ çулсенче юрăхсăр тенĕ тракторпа ĕçлесе хăйĕн сменинче 110 гектар, Каштанова трактористка—106 гектар сухаларĕç.

Майăн 16-мĕшĕ тĕлне МТС хăйĕн çураки вăхăтĕнче тумалли ĕçĕсен планне 90 процент тултарнă.

Ф. АРХИПОВ,
МТС директорĕ.

### Колхозниксем хавасланса ĕçлеççĕ

ШĂМĂРШĂ, майăн 17-мĕшĕ. (Телефонпа). Сталин юлташ совет халăхне чĕнсе каланине кашни колхозрах калама çук пысăк çĕкленÿпе кĕтсе илчĕç. Кашни ялтах кăнтăрла та çĕрле те хаяр тăшмана пуçĕпех аркатса тăкни çинчен чунчĕререн савăнса калаçаççĕ. Çĕршер агитаторсем колхозсен уйхирĕсенче Сталин юлташăн историллĕ сăмахне колхозниксене ăнлантарса параççĕ.

«Канаш» колхоз председателĕ Богатов юлташ 60 çулта, унăн 4 ывăлĕ мĕн вăрçă пуçланнăранпах нимĕç захватчикĕсене аркатассишĕн фронтра çапăçаççĕ. Çĕнтерÿ кунĕ çитнĕ ятпа пулса иртнĕ митингра вăл хумханса çапла каланă:

— Вăрçăн йывăр çулĕсенче те пирĕн аслă çулпуç Сталин юлташ пире çĕнтерÿ патне илсе пырассине чунтан шанса ĕçлерĕмĕр. Пирĕн колхоз пысăках мар, анчах эпир пур ĕçе те вăхăтра туса пытăмăр. Кăçал та çуракинче колхозниксемпе колхозницăсем çĕрле те, кăнтăрла та ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Çуракине эпир кĕске вăхăтра лайăх пахалăхпа туса пĕтерме сăмах паратпăр,—терĕ.

«Канаш» колхоз членĕсем тĕштырăсемпе пĕр çул ÿсекен курăксене 5 кунра акса пĕтерчĕç.

Ялпанах малта пыракан «Заря» колхозта 190 гектар тĕштырăсене 9 ĕç кунĕнче лайăх пахалăхпа акса пĕтерчĕ.

«Новая деревня» колхоза кăçал районри ытти колхозсем валли сортлă вăрлăхсем тăвакан колхоз тунă. Çак колхоза Отечественнăй Аслă вăрçă инвалидĕ Давыдов юлташ ертсе пырать. Колхоз 135 гектар тĕштырăсене 7 ĕç кунĕнче пысăк пахалăхпа акса пĕтерчĕ.

Иртнĕ çулсенче юлса пынă «Пламя труда» колхозра кăçал колхоз председателĕ Осипов юлташ ĕçе пĕлсе организацилеме пултарчĕ. Уйрăм сдельщинăпа ĕçлени, ĕç кунĕпе тата машинăсемпе туллин усă курни пысăк çитĕнÿ патне илсе пычĕ. Колхоз 177 гектар тĕштырăсене 10 кун хушшинче пысăк пахалăхпа акса пĕтерчĕ.

«Правда» колхоз районри пысăк колхозсенчен пĕри. Унăн акмалли çĕр лаптăкĕ 326 гектар ытларах. Çак колхоз та тĕштырăсемпе пĕр çул ÿсекен курăксене акса пĕтерчĕ. Çавăн пекех «Динамо» колхоз та (председателĕ Кудряшов юлташ) 200 гектар тĕштырра 10 кунра, Максим Горький ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Николаев юлташ) мĕнпур тĕштырăсене 4 кунра акса пĕтерчĕç.

Майăн 16-мĕшĕ тĕлне пурĕ 10 колхоз тĕштырăсемпе пĕр çул ÿсекен курăксене акса пĕтернĕ. Районĕпе пурĕ 5085 гектар акнă. Ку, паллах, питĕ çителĕксĕр. МТС те кирлĕ пек ĕçлеймест-ха. Паянхи кун тĕлне тракторсемпе пурĕ те 1580 гектар кăна сухаланă.

Районра юлса пыракан колхозсем те нумай. «Кзыл юл» колхоз (председателĕ Невметов юлташ) юлса пырать. Кунта ĕçе тĕрĕс организацилемен. Калинин ячĕпе тăракан колхоз та (председателĕ Можаев юлташ) туртăм вăйĕ çителĕксĕр пирки юлса пырать. Çакна шута илсе Калинин ячĕпе тăракан колхоза 3 трактор янă. Çавăн пекех юлса пыракан ытти колхозсене те тракторсем ярса панă тата малта пыракан колхозсенчен туртăм вăйĕ ярса пулăшу параççĕ.

И. ДУБОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

### Малтисем юлса пыракансене пулăшаççĕ

ÇĔМĔРЛЕ, майăн 17-мĕшĕ. (Телефонпа). Хĕрлĕ Çарăн историллĕ çĕнтерĕвĕсемпе тата Сталин юлташ чĕнсе каланипе хавхаланса колхозниксем çуракинче пысăк çĕкленÿпе ĕçлеççĕ. Чăн малтанах «Волга» колхоз (председателĕ Федотова юлташ) 7 ĕç кунĕнче, «Комбайн» колхоз (председателĕ Осипов юлташ) 10 ĕç кунĕнче, «Заря» колхоз (председателĕ Кириллов юлташ) 8 ĕç кунĕнче, «Первое мая» колхоз (председателĕ Чекменева юлташ) 5 ĕç кунĕнче, «Искра» колхоз (председателĕ Кузьмин юлташ) 10 ĕç кунĕнче, «Подгорная» колхоз (председателĕ Ласковенков юлташ) 8 ĕç кунĕнче, «Комбинат» колхоз (председателĕ Кузьмин юлташ) 10 ĕç кунĕнче. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Ежов юлташ) 8 ĕç кунĕнче. «Молодая сила» колхоз (председателĕ Захаров юлташ) 8 ĕç кунĕнче, «Вперед» колхоз (председателĕ Майоров юлташ) 8 ĕç кунĕнче, «Красная звезда» колхоз (председателĕ Леонтьев юлташ) 8 ĕç кунĕнче тĕштырăсемпе пĕр çул ÿсекен курăксене хăйсен туртăм вăйĕсемпех акса пĕтерчĕç. Çак колхозсен çуракинчи ĕç пахалăхĕ те лайăх, вĕсем сеялкăсемпе те туллин усă курнă.

Ленин ячĕпе тăракан колхоз та акса пĕтерчĕ. Ку колхозра МТС тракторĕсем ĕçлерĕç. Юлса пыракан «Красноармеец», «Краснофлотец», «Лесной Огонек», «Новая жизнь», «Ударник» колхозсене пулăшма тракторсем янă, çавăн пекех тĕштырăсем акса пĕтернĕ «Комбайн», Ленин ячĕпе тăракан тата ытти колхозсем те вĕсене пулăшма лашасем ярса панă. МТС тракторĕсем колхозсенче çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха, паянхи кун тĕлне МТС хăйĕн планне пурĕ те 62 процент кăна тултарнă. Çак кунсенче кăна 11 трактор подшипниксем ирĕлнĕ пирки ĕçлемесĕр ларчĕç. Çакăн пек аварисем трактористсемпе механиксем тракторсене техника енчен кирлĕ пек пăхса усраманнинчен пулаççĕ.

В. ЧЕРНОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.



Ÿкерчĕк çинче: Шăмăршă районĕнчи Пуянкассинчи «Заря» колхозăн председателĕ В. А. Тимофеев юлташ. Вăл ертсе пыракан колхоз кашни çулах ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн пурнăçлать. Çур тыррисене кăçал районра чи малтан тата пысăк пахалăхпа акса пĕтернĕ.
Н. ДАНИЛОВ фотоÿкерчĕкĕ.

### РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ 1945 ÇУЛХИ МАЙĂН 15-МĔШĔ ТĔЛНЕ ÇУРАКИ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

| Районсем | Пĕтĕмпе акнă | Çав шутран: Тĕштырăпа пăрçа йышши тырăсем | Çав шутран: Пĕр çул ÿсекен курăксем |
|---|---|---|---|
| Вăрнар | 86,1 | 101,5 | 100,0 |
| Муркаш | 85,2 | 100,0 | 60,9 |
| Шăхасан | 85,1 | 97,0 | 82,5 |
| Красноармейски | 84,7 | 100,7 | 90,7 |
| Сĕнтĕр | 83,1 | 95,6 | 99,4 |
| Çĕрпÿ | 81,7 | 96,6 | 88,9 |
| Шупашкар | 81,7 | 101,1 | 83,2 |
| Советски | 81,2 | 101,1 | 55,8 |
| Канаш | 79,8 | 95,8 | 68,5 |
| Ишлей | 79,2 | 97,3 | 70,8 |
| Калинино | 79,1 | 102,2 | 76,4 |
| Чурачăк | 78,7 | 92,6 | 53,2 |
| Елчĕк | 78,2 | 90,4 | 40,4 |
| Сĕнтĕрвăрри | 76,5 | 98,8 | 89,7 |
| Октябрьски | 75,0 | 95,8 | 48,7 |
| Куславкка | 73,9 | 88,9 | 45,0 |
| Элĕк | 73,0 | 91,2 | 19,6 |
| Етĕрне | 72,6 | 92,9 | 89,0 |
| Вăрмар | 71,2 | 85,3 | 56,2 |
| Чкаловски | 66,9 | 66,6 | 39,4 |
| Шăмăршă | 64,7 | 63,0 | 43,3 |
| Комсомольски | 64,0 | 67,7 | 67,2 |
| Тăвай | 58,1 | 57,0 | 86,5 |
| Хĕрлĕ Чутай | 52,4 | 63,5 | 34,5 |
| Йĕпреç | 51,6 | 61,7 | 62,8 |
| Çĕмĕрле | 49,6 | 63,9 | 49,1 |
| Пăрачкав | 47,7 | 54,1 | — |
| Улатăр | 47,3 | 58,4 | 38,7 |
| Первомайски | 47,0 | 53,5 | 12,8 |
| Кувакино | 42,4 | 48,9 | 29,5 |

### ВĂЙЛĂ ТЫРПУЛШĂН КĔРЕШЕÇÇĔ

Вăрмар районĕнчи колхозсем кăçал, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, çуракинче нумай лайăхрах ĕçлеççĕ. Майăн 16-мĕшĕ тĕлне районри колхозсем тĕштырăсене акса пĕтернĕ, пĕтĕм çураки планне 71 процент ытларах тултарнă. Уйрăмăнах «Аниш», «Красный Шептахи», «Дружба», «Свобода», «Красная Кубня», «Заря», «Ямбай» колхозсем лайăх ĕçлеççĕ. «Красные Шептахи» колхозри комсомолец П. Степанов 13 ретлĕ сеялкăпа кунне 4.5 гектар вырăнне 8—8,5 гектар акнă, çапла вара Степанов юлташ çураки вăхăтĕнче пурĕ 47 гектар акнă.

Кăçал çураки ĕçĕсем уйрăмăнах «Красная Кубня» колхозра ăнăçлă иртнĕ. Çак колхоз 435 гектар тĕштырра 9 ĕç кунĕнче пĕтĕмпех машинăпа ретĕн-ретĕн акнă. Çак колхозри сеялкăпа акакан хĕрача Анна Чеснокова кашни кунах ĕç нормине ытлашшипех тултарнă. Кунта 168 гектар кĕрхи калчасене кайăк-кĕшĕк тислĕкĕпе тата тислĕк шĕвекĕпе тăрантарса çÿренĕ. Халĕ кунта çарансем çÿреççĕ, техникăллă культурăсем акаççĕ тата çĕрулми лартмалли вырăнсене сухаласа çÿреççĕ. «Красная Кубня» колхозра лашасемпе кăна мар, кÿлсе ĕçлеме вĕрентнĕ вăкăрсемпе те анлăн усă кураççĕ.

Колхозра агитациллĕ-массăллă ĕç ăнăçлă пырать. Парти пуçламĕш организацин секретарĕ Ю. Бандырева юлташ агитаторсене лайăх ертсе пырать. Çак колхозри 6 коммунист, вĕсенчен Г. Иванов, А. Евдокимов, Ф. Сапаркин, Гаврилов ялпанах колхозниксем хушшинче ĕçлеççĕ.

— Кăçал, Хĕрлĕ Çар историллĕ çĕнтерÿсем туса тăшмана аркатса тăкнă çул, пирĕн колхозниксем кашни гектартан 120 пăтран кая мар тĕштырă туса илессишĕн ĕçлеççĕ,—тет ватă колхозник Испатов юлташ. (Хамăр корр.).

## ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

### Чăваш республикинчи суту-илÿпе хатĕрлев организацийĕсенчи, обществăллă апатлану системинчи, предприятисен подсобнăй хуçалăхĕсенчи рабочисене, служащисене тата ертсе пыракан работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

(Малалли, пуçламăшĕ «Чăваш Коммуни» 82-мĕшпе 91-мĕш номерĕсенче).

28. Мария Ильинична Ильинана — Шупашкарти столовăйсен трестĕн 2-мĕш номерлĕ столовăйĕнчи повара.

29. Александр Иванович Камешенцева — Чăвашпотребсоюзăн юрист-консультне.

30. Петр Федорович Капитонова—Улатăр районĕнчи Алтышево вăрманпромхозăн ОРС начальникне.

31. Нина Васильевна Киреевăна — БОГИЗ-ăн Чăваш республикинчи отделенийĕн управляющине.

32. Ольга Никифоровна Козака—Çĕмĕрлери механизациленĕ вăрман пункчĕ çумĕнчи ОРС-ăн Мыслецри столовăйĕн заведующине.

33. Алексей Иванович Козлова—Торгплодоовощĕн Канашри кантурĕнчи каткапичке тăвакан рабочие.

34. Антонина Степановна Козловăна—Куславкка комбинатĕнчи ОРС-ăн 1-мĕш номерлĕ столовăйĕн официанткине.

35. София Корниловна Корниловăна — Красноармейски районри Чатукассинчи ялпо председательне.

36. Алексей Федорович Костерина — Сĕнтĕрвăрри райпотребсоюзĕ çумĕнчи хатĕрлев кантурĕн чĕртавар склачĕн заведующине.

37. Александра Васильевна Краснăвăна — Комсомольски райпотребсоюзĕн главнăй бухгалтерне.

38. Петр Николаевич Кудряшова — Вăрмар районĕнчи Кавалти ялпо председательне.

39. Дарья Михайловна Лашинăна — Чăвашторгăн Çĕмĕрлери отделенийĕн 3-мĕш номерлĕ столовăйĕнчи повара.

40. Вера Ивановна Лебедевăна—Чăваш АССР Суту-илÿ Халăх Комиссарĕн заместительне.

41. Николай Григорьевич Лещева — Йĕпреç райпотребсоюзĕн председательне.

42. Пелагея Федоровна Лохевăна—Чăвашторгăн Çĕмĕрлери отделенийĕн 3-мĕш номерлĕ столовăйĕнчи официанткăна.

43. Зинаида Лукинична ...инана — Шупашкар хулинчи завод ...-ĕн столовăйĕнчи апат паракана.

(Малалли пулать).

# Чăваш АССР Совнаркомĕнче

## Апат-çимĕç комбиначĕсен, промысла кооперации артелĕсен тата инвалидсен кооперации артелĕсен социализмлă ăмăртăвĕн апрель уйăхĕнчи итогĕсем çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕ, республикăри апат-çимĕç комбиначĕсен, промысла кооперации артелĕсен тата инвалидсен кооперации артелĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1945 çулхи апрель уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, çаксем мала тухнине палăртнă:

**Апат-çимĕç комбиначĕсем енĕпе:**

**Канаш хулинчи апат-çимĕç комбиначĕ** (директорĕ Захватова юлташ, хула Совет исполкомĕн председателĕ **Кизилов юлташ**) пĕтĕм продукци туса кăлармалли плана 131,4 процент тултарнă, март уйăхĕнчипе танлаштарсан, 18,8 процент чухлĕ продукци ытларах туса кăларнă. Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне çак комбинат аллинче хăварма тата ăна 8 пин тенкĕ преми пама йышăннă.

Апрель уйăхĕнче Йĕпреç, Кувакино, Сĕнтĕрвăрри тата Вăрмар районĕсенчи апат-çимĕç комбиначĕсем лайăх ĕçленине, Элĕк, Канаш, Хĕрлĕ Чутай тата Шупашкар районĕсенчи апат-çимĕç комбиначĕсем начар ĕçленине палăртнă.

**Промысла кооперации артелĕсем енĕпе:**

**Шупашкарти «Пекарь» артель** (правлени председателĕ **Петров юлташ**, хула Совет исполкомĕн председателĕ **Аникин юлташ**) пĕтĕм продукци туса кăлармалли плана 169,9 процент тултарнă, март уйăхĕнчипе танлаштарсан, 37 пин тенкĕлĕх продукци ытларах туса кăларнă. Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне, Вăрмарти Осипенко ячĕпе тăракан артельрен илсе, «Пекарь» артеле пама тата ăна 8 пин тенкĕ укçа парса премилеме йышăннă.

**Шупашкарти «Вышивка» артель** (правлени председателĕ **Маркелова юлташ**) пĕтĕм продукци туса кăлармалли плана 132,4 процент тултарнă, март уйăхĕнчинчен 9.900 тенкĕлĕх продукци нумайрах туса кăларнă. «Вышивка» артеле 4 пин тенкĕ преми памалла тунă.

**Шупашкар районĕнчи Çĕньял Уйкасри «Араслан» артель** (правлени председателĕ **Нестеров юлташ**, райсовет исполкомĕн председателĕ **Миронов юлташ**) пĕтĕм продукци туса кăлармалли плана 185 процент тултарнă. «Араслан» артеле 3 пин тенкĕ преми панă.

Иртнĕ уйăхра Шупашкар районĕнчи Чапаев ячĕпе тăракан, Сĕнтĕрвăрринчи «Парижская Коммуна», Улатăрти «Красная звезда», Сĕнтĕр районĕнчи «Дружба», Вăрмарти Осипенко ячĕпе тăракан тата Етĕрнери Сталин ячĕпе тăракан артельсем лайăх ĕçленине палăртнă.

Улатăр районĕнчи «Заря», Вăрнарти «Труд» тата Çĕнĕ Чурачăкри «Маяк» артелĕсем апрель уйăхĕнче начар ĕçленĕ.

**Инвалидсен кооперации артелĕсем енĕпе:**

**Йĕпреçри «Помощь» артель** (правлени председателĕ Ларин юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ **Семенов юлташ**) Вăрнарти «Трудовик» артельпе ăмăртса ĕçлесе, пĕтĕм продукци туса кăлармалли плана 147,4 процент, ĕçсыннисем валли куллен кирлĕ таварсем туса кăлармалли плана 243 процент тултарнă. Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне Шупашкарти «Чебторгин» артельрен илсе, «Помощь» артеле пама тата ăна 13 пин тенкĕ укçа парса премилеме йышăннă.

**Шупашкарти «Чебторгин» артель** (правлени председателĕ **Мицина юлташ**), Сĕнтĕрвăрринчи «Социализм» артельпе ăмăртса ĕçлесе, пĕтĕм продукци туса кăлармалли плана 134,3 процент, ĕçсыннисем валли куллен кирлĕ таварсем туса кăлармалли плана 142,4 процент тултарнă. «Чебторгин» артеле 8 пин тенкĕ преми памалла тунă.

**Канашри «Красный воин» артель** (правлени председателĕ **Корчагин юлташ**), Улатăрти «Союз инвалидов» артельпе ăмăртса ĕçлесе, пĕтĕм продукци туса кăлармалли плана 103,6 процент, ĕçсыннисем валли куллен кирлĕ таварсем туса кăлармалли плана 102,8 процент тултарнă. «Красный воин» артеле 5 пин тенкĕ преми панă.

Апрель уйăхĕнче Çĕмĕрлери «Партизан», Ильинкăри «Производственник», Чăкаларти «Красный стрелок» тата Улатăрти «Союз инвалидов» артельсем лайăх ĕçленине палăртнă.

Бирери, Вăрнарти тата Кӳкесри артельсем апрель уйăхĕнче начар ĕçленĕ.

## *Пионер лагерĕсемпе площадкăсенче 1.675.000 ача пулать*

Профсоюз организацийĕсем пионер лагерĕсемпе сыватмалли площадкăсем уçас тĕлĕшпе халĕ васкасах ĕçлеççĕ. Кăçал çулла 1.675.000 ача канмалла тата санаторисенчен сывалса тухмалла. Вăл хисепрен рабочисемпе служащисен 244.000 ачине, чи малтан çар службинчи çынсемпе Отечественнăй вăрçă инвалидĕсен ачисене, санатори евĕрлĕ пионер лагерĕсене 40 кунлăха ярĕççĕ. Ахаль лагерьсенче висĕ эрне пурăнмалла пулать. Совет Союзĕнче пĕтĕмпе икĕ тата висĕ смена хушши ĕçлекен пионер лагерĕсем 3.000 ытла пулаççĕ, сыватмалли площадкăсем 1.000 пулаççĕ.

Кăçал Литвара, Латвире тата Эстонире пуçласа пионер лагерĕсем уçаççĕ. Çак республикăсенче ачасем валли тинĕс хĕрринчи илемлĕ вырăнсенчи чи лайăх хăчăсене уйăрса панă.

Украинăра кăçал 158.000 ача канать, пĕлтĕрхипе танлаштарсан—икĕ хут ытларах канать. Путевкăсен ытларах пайне çĕркăмрăк промышленносĕне нефть промышленносĕнчи, металлурги предприятийĕсемпе машинăсем тăвакан предприятисенчи тата чугун çул транспортĕнчи рабочисен ачисене параççĕ.

ВЦСПС профсоюз организацийĕсене çак кунсенчех пионер лагерĕсене хатĕрлесе, йĕркене кĕртсе çитерме хушнă. Пур çĕрте те халĕ лагерь начальникĕсемпе вожатăйсем валли семинарсем организацилеççĕ. Ачасен малтанхи ушкăнĕсем лагерьсене июнĕн пуçламăшĕнче тухса каяççĕ.

(ТАСС).

### РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ 1945 ÇУЛХИ МАЙĂН 10-МĔШĔ ТĔЛНЕ КĔСРЕСЕНЕ ЧУПТАРАС ТАТА ТИХАСЕНЕ СЫХЛАСА ХĂВАРАС ĔÇ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

### СВОДКА

| Районсем | Кĕсресене чуптарнă (процентпа) | Тихасене сыхласа хăварас тĕлĕшпе мисĕмĕш вырăн йышăнать |
|---|---|---|
| Чкаловски | 65,5 | 18 |
| Улатăр | 65,0 | 28 |
| Октябрьски | 60,4 | 13 |
| Çĕмĕрле | 60,0 | 20 |
| Пăрачкав | 60,0 | 27 |
| Кувакино | 59,0 | 30 |
| Шăмăршă | 56,0 | 25 |
| Куславкка | 51,0 | 10 |
| Çĕрпӳ | 49,6 | 6 |
| Елчĕк | 47,6 | 29 |
| Вăрмар | 47,2 | 12 |
| Красноармейски | 47,1 | 2 |
| Етĕрне | 46,2 | 16 |
| Элĕк | 46,0 | 8 |
| Первомайски | 45,0 | 26 |
| Тăвай | 43,7 | 11 |
| Йĕпреç | 44,5 | 19 |
| Вăрнар | 43,4 | 15 |
| Сĕнтĕрвăрри | 41,0 | 21 |
| Комсомольски | 41,0 | 22 |
| Шăхасан | 39,0 | 17 |
| Чурачăк | 37,1 | 5 |
| Муркаш | 36,8 | 4 |
| Шупашкар | 35,8 | 24 |
| Ишлей | 34,8 | 3 |
| Канаш | 32,0 | 1 |
| Хĕрлĕ Чутай | 30,0 | 23 |
| Сĕнтĕр | 28,3 | 7 |
| Калинино | 24,5 | 14 |
| Советски | 17,6 | 9 |

### КУНТА ЛАШАСЕНЕ ЮРАТСА ПĂХНИ ÇУК

**ХĔРЛĔ ЧУТАЙ.** Вăрçă вăхăтĕнче районта лашасен шучĕ чылай чакрĕ, халĕ те чаксах пырать. Кăçал колхозсенче 68 лаша вилнĕ. Уйпуçĕнчи Энгельс ячĕпе тăракан колхозра 4 лаша вилнĕ: пĕр лашине пăшалпа персе вĕлернĕ, ыттисем ырханланса чирлесе вилнĕ.

Лашасемпе тискерле усă курни уйрăм колхозсенче халĕ те палăрать. Çавна пула ĕнтĕ лашасем вилеççĕ, пĕтĕ кĕсресем хăм пăрахаççĕ. Кăçал пĕтĕмпе районĕпе 33 кĕсре хăм пăрахнă.

«Заря» колхозра 7 кĕсре хăм пăрахнă. Колхоз председателĕ пулса ĕçленĕ П. Крыцовкин юлташ хăй йывăр ĕçре усă курса, пĕр кĕсрене хăм пăрахтарнă. Çапла ĕнтĕ колхоз руководителĕсем ку ĕçре айăплисене ответ умне тăратас вырăнне хăйсем айăплă пулса тăраççĕ.

«Авангард» колхозра 5 кĕсрене хăм пăрахтарнă пулин те, колхоз председателĕ Ярусов юлташ никама та ответ тыттарма шутламасть. Энгельс ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Плещивцев юлташ та 6 кĕсрене хăм пăрахтарнăшăн ответ тыттарас пирки нимĕн те туман.

Районти колхозсем умĕнче лашасен йышне куллен хутшăнтарса пырас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тăраççĕ. Кĕсресене пурне те чуптарса хăварас пулать. Пĕтĕ кĕсресене хăм пăрахассинчен сыхламалла.

ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕн лашасен йышне ӳстерес тĕлĕшпе колхозсенче мĕн тунине куллен тĕрĕслесе пымалла. Ку ĕçре айăплисене çийĕнчех ответ тыттармалла.

**П. ТИХОНОВ.**

## Пĕрлешӳллĕ нацисен Сан-Францискăри конференцийĕнче

САН-ФРАНЦИСКО, майăн 14-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Конференцин тĕрлĕ комитечĕсем паян та пĕтĕм тĕнчери организацин уставне йĕркелес тĕлĕшпе ĕçленĕ. Çак ĕçĕн чи пысăк пайне хальхи вăхăтра техника тĕлĕшĕнчен якатас тĕлĕшпе пăхаççĕ. Çавăнпа та Сан-Франциско хулинчен делегаци пуçлăхĕсем хăйсен çĕршывĕсене таврăнаççĕ. Ĕнер Сан-Францискăран Иден тата Эттли тухса кайнă, паян Канада премьер-министрĕ Кинг тухса каять.

### ХЕЛЬСИНКИ ХУЛИНЕ ПЕТСАМО (ПЕЧЕНГА) РАЙОНĔНЧИ ЧИККЕ КĂТАРТСА ПАРАКАН СОВЕТ СОЮЗĔПЕ ФИНЛЯНДИ КОМИССИЙĔНЧИ СОВЕТ ДЕЛЕГАЦИЙĔ ÇИТНĔ

ХЕЛЬСИНКИ, майăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Хельсинки хулине Петсамо (Печенга) область участокĕнче Совет Союзĕпе Финлянди хушшинчи чикке кăтарса паракан Совет Союзĕпе Финлянди комиссийĕн совет делегацийĕ çитнĕ. Делегаци председателĕ пулса советник А. М. Александров ĕçлет, делегаци членĕсем М. А. Красковец полковник, П. С. Паша полковник тата И. М. Некрасов подполковник.

Вокзалта совет делегацине союзниксен Финляндири контроль комиссийĕн политика советникĕн помощникĕсем Маевский тата Рыбаков юлташсем, Совет Союзĕпе Финлянди хушшинчи чикке кăтартса паракан комиссин Финлянди делегацийĕн членĕсем К. Сомерто полковникпа П. Калая доктор хирĕç тухса кĕтсе илнĕ.

### ФИРЛИНГЕР КАРПАТ ЛЕШ ЕНЧИ УКРАИНА ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, майăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Чехословакири пресс-бюро илнĕ сведенисем тăрăх, Рейтер агентстви Чехословакин премьер-министрĕ Фирлингер çапла каласа пани çинчен пĕлтерет:

«Карпат леш енчи Украинăра Полтава тата Харьков облаçĕсенчи хресченсемпе пĕр пек калаçакан украинецсем пурăнаççĕ. Вĕсем халĕ хăйсен автономиллĕ правительствине тунă. Çав правительство Карпат леш енчи Украинăна Совет Союзĕ çумне пĕрлештересси çинчен каласа панă. Анчах та ку правительство хальхи вăхăтра пирĕн правительство власне пĕтĕмпех йышăнать. Чехословакин Лондонри государство совечĕн членĕ пулнă Иван Петрушак халĕ Ужгородра шалти ĕçсен министрĕн представителĕ пулса ĕçлет. Петрушак пирĕнпе çыхăну тытать. Чехословаки правительствипе те, Карпатри Украинăн нади совечĕпе те питĕ лайăх килĕштерсе ĕçлет.

Президент Бенеш тата пирĕн правительство Карпатри Украина çинчен тăракан ыйтăва Мускавпа питĕ туслăн, та килĕшӳллĕн, вырăнти халăхăн шухăш-кăмăлне шута илсе татса парасшăн.

### ЧЕХОСЛОВАКИ ПРЕЗИДЕНЧĔ ЭДУАРД БЕНЕШ ПРАГА ХУЛИНЕ ПЫНĂ

ПРАГА, майăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Прага хулине Чехословаки республикин президенчĕ доктор Эдуард Бенеш çитнĕ. Чехословаки столицинче ăна йышлă халăх питĕ хавасланса кĕтсе илнĕ. Эдуард Бенеш сăмах каланă. Вăл хăйĕн сăмахĕнче Хĕрлĕ Çар халăхсене ирĕке кăларас тĕлĕшпе питĕ пысăк ĕçсем тунине кăтартса панă тата Совет Союзĕпе Чехословаки пĕр-пĕринпе туслăн пурăнасси, пĕр-пĕрне пулăшасси тата вăрçă хыççăн пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесси çинчен тунă договор питĕ паха пулнине палăртса панă.

### ФРАНЦИН КОНСУЛЬТАЦИ АССАМБЛЕЙИ ÇĔНТЕРӲ ЯЧĔПЕ ЧАПЛĂ ЛАРУ ТУСА ИРТТЕРНĔ

**ПАРИЖ,** майăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Франс пресс агентстви çапла пĕлтерет: ĕнер Консультаци ассамблейи Францине союзниксен çарĕсем çĕнтернĕ ятпа чаплă лару туса ирттернĕ. Франци парламенчĕн ларăвне историре пĕррремĕш хут радио тăрăх сарнă. Лару пулса иртнĕ Люксембург дворецне илемлетсе пĕтернĕ тата Пĕрлешнĕ нацисен ялавĕсене çакса илемлетнĕ.

### ГРЕЦИРИ ЗАБАСТОВКА

АФИНЫ, майăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Майăн 11-мĕшĕнче Пирей тата Салоники хулисенчи табак фабрикисенче ĕçлекен рабочисем забастовка пуçланă, çавăн пекех тата Волос хулинчи 800 портри рабочисемпе банкри служащисем те забастовкăна хутшăннă. Забастовка тăвакансем, тавар хакĕсем ӳснĕ пирки, ĕç укçине ӳстерме ыйтаççĕ. Çавнашкалах тата Волос районĕнчи шоферсем те забастовка пуçланă. Афинăри кинотеатрсенче ĕçлекен служащисен забастовки пуçланни пĕр эрне иртет.

## Лăпкă океан çинчи вăрçă

**ЛОНДОН,** майăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен Лăпкă океанĕн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешӳллĕ командованийĕн штабĕ çапла пĕлтернĕ: Америка çарĕсем Минданао утравĕн 95 процентне ирĕке кăларнă. Таракан ятлă утрав çинче союзниксен çарĕсем авиацийе флот пулăшнипе Япони позицийĕсене атакăланă. Ку позицисем Памусянри нефть промыслисенчен хĕвелтухăçнелле каякан çула хӳтĕлесе тăнă.

Союзниксен самолечĕсем японецсен Борнео утравĕ çинчи аэродромĕсемпе гаванĕсем çине бомбăсем пăрахнă, çавăн пекех тата Формоза утравĕн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи тата Целебес утравĕнчи Япони сооруженийĕсене тапăннă.

**ВАШИНГТОН,** майăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Лăпкă океан çинчи флочĕн штабĕ çапла пĕлтерет: майăн 12-мĕшĕпе 13-мĕшĕнче американецсен авианосецсем çинчен вĕçсе улăхнă самолечĕсем Японин Кюсю утравĕ çинчи аэродромĕсемпе сооруженийĕсене тапăннă.

Окинава утравĕ çинче Америка çарĕсем Япони çарĕсемпе йывăррăн çапăçнă.

### ГЕРИНГА ВĂРÇĂ ПРЕСТУПНИКĔСЕН СПИСОКНЕ КĔРТНĔ

ЛОНДОН, майăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Пĕрлешнĕ нацисен вăрçă преступленийĕсене йĕрлесе тĕпчеме тунă комиссийĕ ĕнер çапла пĕлтернĕ: «Ку кунсенче хаçат-журналсем Геринга айăпласси çинчен нумай çыраççĕ. Савна май Пĕрлешнĕ нацисен вăрçă преступленийĕсене йĕрлесе тĕпчеме тунă комиссийĕ çапла пĕлтерме полномочи илнĕ: 1944 çулхи ноябрь уйăхĕнчех Геринг ятне вăрçă преступленийĕсемшĕн айăпланакан çынсен пĕрремĕш списокнех кĕртнĕ. Çав списока Пĕрлешнĕ нацисен комиссийĕ йышăннă».

### АМЕРИКĂРИ РАДИО КОРРЕСПОНДЕНЧĔ ГИММЛЕРА АРЕСТЛЕНИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, майăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Америкăн Колумбири радио саракан компанийĕн Парижри корреспонденчĕн пĕлтерĕвне парать. Вăл пĕлтерӳре Гиммлер халĕ Англи влаçĕсен аллинче тăни çинчен каланă. Дениц адмирал ăна Фленсбург районĕнче тытса чарнă та халĕ Англи çарĕсен аллине панă пулмалла.

### АМЕРИКА ÇАРĔСЕМ ГЕСТАПО НАЧАЛЬНИКĔН ЗАМЕСТИТЕЛЬНЕ КАЛЬТЕНБРУННЕРА ЯРСА ТЫТНĂ

ЛОНДОН, майăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсен Англири радиопередачикĕ пĕлтернĕ тăрăх, Америкăн 80-мĕш дивизийĕн отрячĕ Австри патриочĕсемпе пĕрле гестапо начальникĕн заместительне тата эсэсовецсен Австрири отрячĕсен начальникне Кальтенбруннера тыткăна илнĕ.

Кальтенбруннера сасартăк, хăй те асăрхаман хушăра тытнă. Тытсанах вăл çапла каланă: эпĕ нимĕçсен çар врачĕ, тенĕ. Унтан çавна ĕнентерекен документсем кăларса тăратнă. Хăйне палламалла ан пултăр тесе, вăл уссисем çылăçтарса лартнă. Çапах та вăл Кальтенбруннер пулнине кăтартса парсан, вăл вара урăх тунма пăрахнă.

Унăн çуртĕнче Германи банкночĕсене, ылттăн тата долларсем нумай тупнă.

Пĕлтерӳре малалла çапла каланă: Кальтенбруннер — чи паллă вăрçă преступникĕсенчен пĕри пулса тăрать. Вăл, ытти преступниксемпе танах, темиçе миллион пĕр айăпсăр çын пĕтнĕшĕн ответ тытмалла.

### АНГЛИ ÇАРĔСЕМ МИЛЬХА ТАТА МАНТЕЙФФЕЛЕ ТЫТКĂНА ИЛНĔ

ЛОНДОН, майăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио çапла пĕлтерет: нимĕçсен генерал-фельдмаршалне Мильха тата 3-мĕш танковăй армин командующине Мантейффель генерал-лейтенанта Англи çарĕсем тыткăна илнĕ. Вĕсене Люнебург хули çывăхĕнчи лагере хупса лартнă.

### ПРАГĂРА ГИТЛЕР АГЕНЧĔСЕНЕ ТЫТСА ХУПНĂ

ПРАГА, майăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта «Богемипе Моравии протекторачĕ» текен облаçăн пуканелле «президентне» Эмиль Гаха тытса хупнă («Богемипе Моравии протекторачĕ» тесе гитлеровецсем хăйсем оккупациленĕ Чехословакие каланă). Çавăн пекех тата çавăнти пуканелле правительствăн «премьер-министрĕ» тата «юстици министрĕ» пулнă Ярослав Крейчие, «премьер-министр» пулнă Рихард Бинерта, «çулйĕрсен министрĕ пулнă» Генрих Каменицкие, «финанс министрĕ» пулнă Иосиф Кальфуса, «ялхуçалăх министрĕ» пулнă Адольф Грубына тата Чехири фашистсен партийĕн руководителĕ пулнă Рудольф Гайд генерала тытса хупнă.

### «ТАЙМС» ХАÇАТ ГИТЛЕРЛА ФЕЛЬДМАРШАЛ БУШ КАЛАНИ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, майăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Майăн 12-мĕшĕнче Германи фельдмаршалĕ Эрнст фон Буш Фленсбургри радио тăрăх сăмах тухса каланă. «Дениц гросс-адмирал хушнă тăрăх тата Англин оккупациллĕ влаçĕсем килĕшнипе, — тенĕ вăл хăйĕн сăмахĕнче,—эпĕ хам çине Шлезвиг — Гольштейн районĕсене, Монтгомери çарĕсем оккупациленĕскерсене, контроллесе тăма илтĕм». Çакăн пирки «Таймс» хаçатăн обозревателĕ çапла çырать: «Буш каланă тăрăх, вăл хăй контроллесе тăракан районсенче пĕртен пĕр закон çеç—акăлчансен законĕ çеç пуçпулса тăрать. Çакăн пек ĕçлесе пырса, Деницпа Буш халех акăлчансемпе малашне çыхăну тытмалли режим туса хума тăрăшаççĕ. Анчах та вĕсенчен пĕрне те шанма çук. Нумайĕшĕ, вĕсене хăйсен вырăнне лартмалла, тесе çине тăрсах калаççĕ»

## Культурăпа çутĕç учрежденийĕсем республика уявĕ умĕн

Партипе правительство ĕçсыннисен политикăллă ăнланулăхĕпе активлăхне ӳстерес тĕлĕшпе вăрçă вăхăтĕнче те чылай ĕçсем турĕç. Çакна СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн постановленийĕ тăрăх район тата хула совечĕн исполкомĕсем çумĕнче культурăпа çутĕç пайĕсене туни те аван кăтартса парать.

Район тата хула совечĕсем çумĕнчи культурăпа çутĕç пайĕсен районри вулав çурчĕсене, клубсене, библиотекăсене çĕнĕлле ертсе пымалла, унта ĕçлеме политика енчен лайăх пĕлекен, чылай вĕреннĕ çынсене тупса памалла тата культурăпа çутĕç учрежденийĕсене йĕркеллĕ ĕçлеме кирлĕ условисем туса памалла.

Ĕçсыннисем хушшинче культурăпа çутĕçе кирлĕ пек туса пыма пирĕн республикăра пур условисене те туса панă. Совет влаçĕн малтанхи çулĕсенче пирĕн республикăра 96 вулав çурчĕ тата 6 библиотека кăна пулнă пулсан, халĕ республикăра 606 вулав çурчĕ, 15 колхоз клубĕ, район центрĕсенче 30 культура çурчĕ, ялсенче 61 библиотека, хуласенче 5 библиотека ĕçлет. Республикăра кашни район центрĕнче пысăк библиотекăсем пур. Ачасем валли хуласемпе ялсенче 5 библиотека организациленĕ. Унсăр пуçне Шупашкарта центральнăй библиотека, музей, лекцисем ирттерекен бюро пур. Вĕсенчен нумайĕшсем халăх хушшинче культурăллă-политикăллă ĕçе ăнăçлăн туса пыраççĕ. Акă, Вăрмар районĕнчи Чуманкасри вулав çуртне илер. Унăн заведующийĕ пулса Мясникова юлташ ĕçлет. Колхоз вулав çурчĕ валли ялти чи лайăх çурта уйăрса панă. Унта сĕтел-пукансем çителĕклĕ. Вулав çуртĕнче вулама тата кружоксен занятийĕсене ирттерме уйрăм пӳлĕм, киносемпе спектакльсем е вечерсем ирттерме уйрăм зал пур. Вулав çуртне ялан таса тытаççĕ. Хаçат-журналсем йĕркеллĕ килсе тăраççĕ.

Вулав çуртĕнче колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен политикăллă пĕлĕвне хăпартаççĕ, агротехникăна вĕренеççĕ. Çав майпа кунта тĕрлĕ кружоксем организациленĕ. Вăл кружоксенче 60 çын ытла вĕренет. Кунта колхозăн юлашки çулсенчи ӳсĕмне кăтартакан выставка пур. Ĕçсыннисене тĕрлĕ справкăсем памалли сĕтел тунă. Вăл ĕçе ялти актива, учительсене анлăн явăçтарнă. Вулав çуртĕнче колхозри ăмăрту мĕнле пынине кăтартакан хăма, хаçат витрини пур. Стена хаçачĕ йĕркеллĕ тухса тăрать.

Вулав çурчĕ колхозниксемпе колхозницăсен канăçне йĕркелес тĕлĕшпе те начар мар ĕçлет. Пушă вăхăтра радио итлеме, шашка-шахматла выляма пулать. Художествăллă пултарулăх кружокĕсем аван ĕçлеççĕ. Ку кружоксене çамрăксем çеç мар ватă колхозниксемпе колхозницăсем те хастарлăн хутшăнаççĕ.

Кунти колхозниксемпе колхозницăсем çĕршыври тата пĕтĕм тĕнчери хыпарсене вăхăтра пĕлсе тăраççĕ. Çавăнпа та вĕсем Тăван çĕршыва пулăшас тесе вăй хĕрхенмесĕр ĕçлеççĕ, государство умĕнчи хăйсен обязательствисене вăхăтра пурнăçласа пыраççĕ.

Лайăх ĕçлекен библиотекăсенчен Пăрачкав районĕн центрĕнчи библиотекăна (заведующийĕ А. Назарова юлташ) илсе кăтартма пулать. Ку библиотекăра пурĕ 30.569 кĕнеке. Кĕнекесен тата вулакансен шучĕ кунта çулран çул ӳссе пырать. Иртнĕ çулта библиотекăран пурĕ 126.442 кĕнеке илсе вуланă. Библиотекăна кĕнеке-хаçат вулама 39.766 çын пырса кайнă. Горбатовăн «Парăнманнисем», Василевскаян «Радуга», Генкинăн «Героический Сталинград», Л. Толстойăн «Война и мир» тата «Чувашский народ в помощь фронту», «Патриотки Советской страны» кĕнекесене тĕрлĕ коллективсенче пĕрлешсе вуласа тухнă, вăл кĕнекесем тăрăх вулакансен конференцийĕсене ирттернĕ. Библиотека пуçарнипе районра ялхуçалăх ситĕнĕвĕсене кăтартма 43 выставка организациленĕ. Лысенкăн «Яровизация» ятлă кĕнекине пĕрлешсе вуласа тухнă, сӳтсе-явнă. Библиотека çумĕнче литература кружокĕ ĕçлет. Вăл кружок членĕсем алăпа çырса илемлĕ литература журналĕ кăларса тăраççĕ. Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 1.250 кĕнеке пухса панă.

Анчах республикăри нумай районсенчи вулав çурчĕсемпе клубсем, библиотекăсем кирлĕ пек ĕçлемеççĕ-ха. Вăрнар, Кувакино, Ишлей, Калинино, Сĕнтĕрвăрри, Первомайски, Шăхасан тата Муркаш районĕсенче политпросвет учрежденийĕсен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ. Хăшпĕр районсенче политпросвет учрежденийĕсен шутне планпа пăхнă хисепе ситермен. Çĕмĕрлери культура çурчĕ хут çинче кăна шутланса тăрать. Улатăрти культура çурчĕн 4 çул хушши хăйĕн çурт пулман. Çĕмĕрле районĕнчи Тăванри вулав çурчĕ пĕр пĕчĕк пӳлĕмре кăна вырнаçнă. Унта пĕр шкафсăр пуçне нимĕн те çук. Хăшпĕр колхозсенче вулав çурчĕсене тырă склачĕсем туса хуни, вĕсене тивĕçлĕ çуртсенчен хĕссе кăларнисем те тĕл пулаççĕ.

Иртнĕ çулта Куславкка районĕн центрĕнчи социализмлă культура çуртне тĕпренех юсаса ĕçе янă. Чăваш Автономийĕ 25 çул тултарнă тĕле Советски район центрĕнчи культура çуртне çĕнетсе туса пĕтереççĕ. Çак юбилей тĕлнех Шăхасан тата Калинино районĕсенче çĕнĕ культура çурчĕсене тума палăртнă. Ку тĕлĕшпе вăл районсенче хĕрӳ ĕçсем пыраççĕ. Шăхасан районĕнче нумай вулав çурчĕсене колхозниксен вăйĕпе юсаса йĕркелеме тытăннă. Çак паха пуçарăва ытти районсенче те кирлĕ пек сармалла. Политпросвет учрежденийĕсене Автономи уявĕ тĕлне ялти чи культурăллă çуртсем туса çитермелле.

Вулав çурчĕсемпе клубсенче, библиотекăсенче кĕнеке-хаçатсем çителĕклĕ пулмалла. Вулакансем кунта хăйсене интереслентерекен кĕнекесене, хаçат-журналсене кирек-хăш вăхăтра та тупса вулама пултарччăр. Анчах хăшпĕр вулав çурчĕсемпе библиотекăсенче «Правда», «Известия» тата нумай кĕнекесемпе журналсене тупса вулама çук. Йĕпреç районĕнчи Хурамалти тата Савкинăри вулав çурчĕсемпе колхозсенчи 4 клуб пĕр хаçат-журнал та илсе тăмаççĕ. Нумай библиотекăсенче кĕнекесен шучĕ ӳсес вырăнне чакни палăрать. Çапла 1944 çулта Куславкка районĕнчи библиотекăсенче 2.412 кĕнеке, Чкаловски районра—2.268 кĕнеке, Ишлей районĕнче—1.784 кĕнеке, Октябрьскинче—1.596 кĕнеке чакнă.

Культурăпа çутĕç учрежденийĕсем хушшинче районри социализмлă культура çурчĕсем уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Вăл çуртсем районра чи культурăллă тата хăйсен ĕçĕпе чи кăтартуллă çуртсем пулса тăмалла. Культура çурчĕсенче лекцисемпе докладсем тăвассине йĕркелемелле, художествăллă пултарулăх кружокĕсене организацилемелле. Кашни районри культура çуртĕнче çав районри колхозсен, ял Совечĕсен ӳсĕмĕсене кăтартакан ялхуçалăх тата стена хаçачĕсен выставкисем пулмалла.

Культурăпа çутĕç учрежденийĕсен пысăк задачисенчен пĕри вăл—художествăллă пултарулăхăн ялан ĕçлекен кружокĕсене организацилесси тата ку ĕçе ĕçсыннисен анлă массисене явăçтарасси пулса тăрать.

Хăшпĕр районсенчи партипе совет тата комсомол организацийĕсем политпросвет учрежденийĕсем çине кирлĕ пек пăхмаççĕ. Ишлей, Çĕмĕрле, Сĕнтĕрвăрри, Калинино, Пăрачкав тата Сĕнтĕр районĕсенчи парти кабинечĕсем çумĕнче ялан ĕçлекен семинарсем çук. Улатăр, Çĕмĕрле, Хĕрлĕ Чутай районĕсенче вулав çуртĕнче ĕçлекенсене 7—8 уйăх хушши ĕç укçи памасăр тăнă. Политпросвет учрежденийĕсенче ĕçлекенсен пĕлĕвне хăпартас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ, ĕç дисциплини кирлĕ вырăнта мар.

Район тата хула совечĕсем çумĕнче культурăпа çутĕç пайĕсене организацилесси эпир республика уявне хатĕрленнĕ вăхăтра пулса пырать. Республика çак уява культурăпа çутĕç учрежденийĕсен ĕçне нихăçанхинчен лайăх йĕркеленине кĕтсе илмелле. Кашни районри культура çуртĕнче, колхозсенчи вулав çурчĕсенче, клубсенче, тăван республикăн, район, ял Совечĕпе колхозăн ӳсĕмĕсене кăтартакан выставкăсем пулччăр. Кашни вулав çурчĕпе клуб çумĕнче художествăллă пултарулăх кружокĕсем аван ĕçлетчĕр. Чăваш халăхĕн чаплă уявне таса та культурăллă çуртсенче, савăнăçлăн кĕтсе илсе уявлар.

**П. МЕДВЕДЕВ,**

**Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи культурăпа çутĕç учрежденийĕсен управлени начальникĕ.**

### Редакцирен

«Чăваш Коммуни» хаçатăн 89-мĕш номерĕнче И. В. Сталин юлташ чĕнсе калани пичетленнĕ. Чĕнсе каланин 9-мĕш абзацĕнче радистка айăпĕпе тĕрĕс мар вырăн кайнă. Вăл абзацăн юлашки икĕ предложенине çапла вуламалла: «Европăри вăрçă тапхăрĕ пĕтрĕ. Мирлĕ аталану тапхăрĕ пуçланчĕ».

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, издательство контори н — 0—23.

Типография № 1 ... при СНК ЧАССР ... 16.000

НТ 00594.